**Ик шлепкеллӗ пӑтасем**

Хӗллехи ҫул улшӑнсӑх тӑрать: е юр хӳсе каять ӑна, е кӗтмен йӗпе-сапа ҫутатса ярать, ҫумӑр хыҫҫӑн сасартӑк шӑнтса пӑрахни те пулкалать; вара ҫул-сукмак тавраша пӗве пӑрӗнчен те хӑрушла шуҫлакланса каять.

Ҫавӑн пек кунсенчен пӗринче, ӳкес марччӗ тесе питӗ асӑрханса, каҫӑртарах пуҫлӑ арҫын йӑкӑш-якӑш пускаласа пыратчӗ. Унччен пулчӗ-ши, кунччен-ши вӑл сулкаланма тытӑнчӗ. Аллинчи туллиех мар хутаҫӗ ҫул хӗрринчи кӗрт ҫине ӳкмеллех вӑркӑнчӗ, хӑй хыҫалалла тайӑлчӗ, тӳрленкелерӗ кӑна — талт-талт пусрӗ те малалла, шап персе анчӗ ӳпнелле. Эх, кулатпӑр эпир! Пӗри куҫне шӑлать, тепри варне тытса тӑрать... Эрлене-эрлене тӑчӗ те: «Мӗн ихӗретӗр?!» — тенӗн пӑхрӗ пирӗн енне ҫаврӑнса. Ун сӑмсинчен юн йӑрласах юхнине куртӑмӑр та — ихӗрме пӑрахрӑмӑр. Вӑл сӑмси айне шӑлса тасатмашкӑн тутӑр шырама тытӑнчӗ пулас — кӗсйисене лӑп-лӑп тутарать. Тин кӑна кулса тӑнӑ чипер пӗр майра куҫне чарса пӗр кана хытса тӑчӗ те сӑмса тутри туртса кӑларчӗ:

— Ме, шӑлӑн, — терӗ ырӑ кӑмӑллӑн. — Ан йӗрӗн. Тин ҫеҫ туяннӑ эпӗ ӑна... Вӗр ҫӗнех...

— Тавтапуҫ, — терӗ ҫеҫ лешӗ айӑпа кӗнӗн.

Тин кӑна шӑл йӗрсе тӑнисенчен тепри инкекри ҫынна шуҫлак ҫӗртен ҫавӑтса тухрӗ.

— Ҫав кирлӗ, — сиввӗн каласа хучӗ кӑра хӗрарӑм. — Пуҫне ытла каҫӑртса ҫӳрет... Ара, каҫӑртмасӑр! Кандидат-иҫ!..

Пурнӑҫра ялан ҫапла. Пӗлӗшӗмӗрсенчен хӑшӗ те пулин инкеке лексен е кулса, шӑл йӗрсе ирттерсе яратпӑр е пулӑшнӑ чух пулӑшатпӑр, е вӗчӗрхенсе савӑнатпӑр. Манӑн калавӑм та ҫавӑн пиркиех.

Халӑхра калас сӑмаха тӳрремӗнех каламаҫҫӗ. Вӑлтасси, иккӗлле, апла та капла ӑнланмалла евитлесси, илӗртесси, куҫ кӗрет суясси (суя ҫур пурнӑҫ мар-им-ха?) йӑлана ҫирӗп кӗрсе юлнӑ.

Мана хама, сăмахран, табак туртма вĕрентессишĕн ăшталаннă çынсем темиçе те пулнă. Вĕсенчен пĕри çапла ăс паратчĕ: «Табакра сиенлине эпĕ нимĕн те курмастăп. — Тĕтĕмне ăша илсен, паллах, пуç çаврăнса кайнă пек те пулать. Эсĕ ун тĕтĕмне ăша ан ил, пулчĕ те».

— Эпĕ табак туртма вĕренни сана мĕн тума кирлĕ? — ыйтаттăм эпĕ.

— Эсĕ манашкалах — пултарулăх çынни, — текелетчĕ вăл, — эсĕ поэт, эсĕ писатель. Табак вăл шухăшлама пулăшать, шуйхануллă кăмăл-туйăмă лăплантарать... Пуçа килекен шухăшсене лайăх çаврăнма вăй хушать, тутăхма памасть. Эсĕ, мĕн, Маяковский туртман тетĕн-и? Туртнă! Туртакансен хушшинче классиксем пинĕ-пинĕпе: Алексей Толстой, Ухсай, Юмшикай...

— Юмшикай? Камсен классикĕ-ши вăл?

— Камсенне лайăх ас тумастăп... Ну, мĕнле калас?.. Вăл пикенсех, чыхăна-чыхăнах, туртнине лайăх пĕлетĕп.

Çук, ӳкĕте кĕмерĕм, çăвара пирус-мĕн хыпмарăм. Юмшикай шайнех анса ларас темерĕм.

Ĕçкĕ-çикĕ енчен илсен вара илĕртекен, черкке сĕнекен пушшех нумай. Черкке философĕсен юрри малтан çапларах.

— Çакăн пек хул-çурăмпа, — текелеççĕ вĕсем, — çĕр грамшăн сана нимĕн те пулмасть.

Вĕсен сăмахне чылай çул хăлхана чикмерĕм. Пурăна киле: «Эрех вăл савăнтарать, кăшт çеç — виçеллĕ — ĕçни сывлăхшăн та усăллă: апат лайăх анать, вар-хырăм тасалать... çавăнпа та пĕр ик çĕр грамшăн тем пулать сана? Эсĕ этем йышши мар, упа йышшийĕ? Сана çур литр та пыра йĕкĕлтемелĕх çеç»...

Таврари çынсем çулăхма, ӳкĕтлеме те тархаслама пăрахчăр тесе тутанса пăхрăм малтанхи хут çĕр грама. Чăн сăмах, вилсех кайман... Ăна ĕçнĕрен вĕр çĕнĕ кĕпепе шăлавара вараласа пĕтернĕ, çапах та — тĕрĕс сăмах: кăнса выртман.

Тĕлĕнмелле япала вăл эрех: унăн малтан-хи виçĕ чаплашки кăна сиенлĕ иккен, ыттисем — тăваттăмĕшсем, пиллĕкмĕшсем — пĕртте сиенлĕ мар. Сăра

пирки те çавнах каламалла: унăн малтанхи алтăрĕ çеç сиенлĕ, хырăм вĕрсе хăпартнă пӳске пек пулса каять пулин те тăваттăмĕш, пиллĕкмĕш... алтăрсем аванах.

Эрех вăл пусма картлашкине аса илтерекен шĕвек. Эрех пĕр вăхăтрах çӳлелле те улăхтарать, аялалла та антарать. Çĕр грамран пуçлатăн кăна — паян çĕр грамм, ыран — ик çĕр, виçмине — виç çĕр... Грамсен виçи çӳлелле улăхса, ӳссе пынă май, пуç ыратасси, мухмăрпа аптăрасси аялаллах — çĕр тĕлнеллех — антарса пырать.

Темиçе çул каялла, килĕшсе татăлнă пекех Шупашкарти кантурсенчен пĕринче пĕр вăхăтрах çӳлелле улăхса аялалла анакансем темиçен те тĕл пултăмăр. Пурин те пер шухăш: кунашкал сайра тĕл пулăва паллă тумалла. Хĕрлĕ Чутай енчен килнĕ Павел Петрович манран тӳрех ыйтрĕ:

— Санăн дача пур-и?

— Пур.

— Унта паян аннӳ пымасть-и?

— Çук. Ма? — ыйтрăм эпĕ.

— Мĕнле — ма? Дислокаци тумалла ку кантуртан. Çăмрăк чухне, хăвах пĕлетĕн, чылай вăй хунă эпĕ ку çуртра. Манăн уйрăм пӳлĕмччĕ. Кунĕпех çавăнта ĕçлесе унтах çĕр каçни те пайтах пулнă. Çавăнпа та манăн ку çуртра лешне ĕçме çеç мар, чĕлхе вĕçне йĕпетсе илме те кăмăлăм çук. Килĕшсе татăлнăн:

— Пирĕн те çавнашкалах, — терĕç. — Эх, уçă сывлăшра ларса тутлăн карăнса илменни тахçантанпах.

— Мĕнех, — терĕм, — атьăр.

— Атьсемĕр, — терĕ урамра Андрей Андреевич, Канаш йĕкĕчĕ, — манăн пĕр сĕнӳ пур?

— Мĕнли? — ыйтрăмăр харăссăн.

— Халĕ пирĕн каймалла... Ăçта иккенне хам та пĕлместĕп. Çав хам та пĕлмен вырăнтан илмелле... Мĕн илмеллине хам та пĕлместĕп...

Ăçталла каймаллине пĕлмесĕрех кайрăмăр та мĕн илмеллине пĕлмесĕрех илтĕмĕр: çын пуçне çуршар литр. Сых ятне — тепрер, мухмăр валли — чĕрĕкшер.

— Çуршар литрпах пире тем пулас çук-ха, — терĕ Нил Наумович. — Эпир мĕн, пĕрремĕш хут-им?..

Дачăна çитрĕмĕр.

Сĕтел хушшине вырнаçрăмăр. Сĕтел сервисĕ те вăраха пымарĕ. Пурте пит-куçа тĕлĕнмелле пĕркелесе илчĕç.

— Мĕн ку? — тĕлĕнтĕмĕр пурте пĕр харăссăн.

— Са-мо-пал-л! Кис...ĕ-ĕ-ĕк... кис... — хуравларĕ Ваçлей Пудович.

— Мĕн кисĕ тата? — ыйтрăм эпĕ. Ваçлей тусăм тем пăрахса парасшăн манăн çук кушакăма йыхăрать пулĕ тесе. — Кушаксăр çурт-йĕр ку манăн.

— Кис... кис... — çаплипех кислетме чарăнаймасть Пудович. — Кис... лота ку... — тинех уçăмлăн персе ячĕ хайхи.

— Мĕн тумалла? — ыйтрăм тусăмсенчен.

— Пĕрре укçа панă тăк... кис... — татăкăн-кĕсĕкĕн сĕнӳ пачĕ Ваçлей Пудович. — Кислотана пĕтермелле.

— Вăл хамăра пĕтермĕ-и? — ыйтрăм эпĕ. Эпĕ ыйтни, ахăртнех, нихăшне те килĕшмерĕ. Мĕншĕн? Мĕншĕн тесен пĕр шухăшлăн шарламасăр ларчĕç, Ваçлей Пудович хăйĕн черккине тултарма пикенчĕ кăна — пурте черккисене ун еннелле тăсрĕç. Эпĕ те вĕсенчен юлмарăм.

Тĕлĕнмелле: эрехĕн малтанхи виçĕ черкки кăна кислота иккен, тăваттăмĕшĕ сасартăках пылакланса кайрĕ, пыра çунтарма пăрахрĕ. Таçта шалта темĕнле кăткăсем хавассăн чĕпĕтме пуçларĕç.

— А-а-а-, çуршар литршăн темех пулмĕ-ха пире, — хĕпĕртетпĕр хамăр...

Ирхине вăрантăм та мĕн пулса иртнине аса илме тытăнтăм... аса илĕвĕме çăра тĕтре хуплать те хурать. Пӳрт ăш-чикне пăхса çаврăнтăм. Пĕчченех... Ыттисем ăçта-ши?

Дача пахчинче акă мĕн куртăм: Пудович икĕ тăваткал метрлă цистернăри шыва ланкăртаттарсах ĕçет. Самантлăха тăхтаса: «Ах, мĕнле сӳнтермелле ăшри кăвара?» — текелет те çĕнĕ хавхаланупа — ланкăрт-ланкăрт.

— Пудович, асăрхан! — сас патăм эпĕ. Вăл ĕçмелли мар, çумăр шывĕ!

— Çумăр шывĕ-и унта, юр шывĕ-и — мĕнпе те пулин сӳнтермелле-çке-ха.

Андрей Андреевич сухан йăранĕсен хушшинче тăватă уран упаленсе çӳрет иккен, симĕс сухан вĕçĕсене çырта-çырта татать те пĕр кана кавлет, унтан — каллех малалла.

Улмуççи енче: «Тамаляк», — тенĕ евĕрлĕ сасă илтрĕм те — ял çыннисен сурăхĕ кĕмен-ши тесе унталла пăхрăм. Павăл Петрович, çăварне самай пысăк антоновка хыпнăскер, тĕлли-паллисĕр улать: «У-у-у! — кăчăк туртать хăй мана. — А-а-а... Вă-вă-вă... М-м-м-...» Нимĕн те ăнланманран вăркăнса çитрĕм ун патне. Пиçме ĕлкĕреймен антоновкăна вăл çăварне ăнăçлах чиксе лартнă, çыртса татма та хăтланнă. Пултарайман. Халь пан улмине нимĕнле кăлараймасть иккен. Янах шăмми, хăрах еннелле пăрăнса ларнăскер, антоновкăна çыртса татма та па-масть. Эпĕ янах шăммине тӳрлетес тĕллевпе кăштах чышкăласа илтĕм çеç — тута-çăвар шăммисем тĕлĕнмелле шăлт-шалт турĕç те антоновка Андрей Андреевич çăварне кĕчĕ кайрĕ.

— А-а-ă-ă-ăле-м! — вăрăммăн мĕкĕрсе ячĕ тусăм ыратнине тӳсеймесĕр.

— Мĕн пулнă? — ыйтрĕ Павел Петрович.

— Андрей Андреевич пан улмине кăлараймасть те, çăтса та яраймасть.

— Ых, пирĕн çĕр-шывра пыр-çăвар ыйтăвĕ хăçан пĕтет-ши? Çиме пуçличчен имененçи пулса ларатпăр çын умĕнче. Çын курман çĕрте перетпĕр те хыпатпăр упшурла. Атя, кăларар унăн çăварĕнчен тухма пĕлменнине.

— Епле майпа?

— Эсĕ малтан пĕр-пĕр хĕскĕч тупса кил-ха, майне-шывне тупăпăр, — мăн кăмăллăрах каласа хучĕ Андрей Андреевич. — Пĕлнĕ пул, çамрăк чух эпĕ пилĕк çул выльăх тухтăрĕнче тăрмашнă!

Часах шĕп-шĕвăр сăмсаллă линцет тупса пытăм та Андрей Андреевича тыттартăм.

— Халь, — терĕ вăл, — кăларатпăр.

Кăшт-кашт тем шухăшласа тăрсан:

— Эсĕ пуç пӳрнӳпе вăта пӳрнӳне ун çăварне чик те пан улмине икĕ енчен хĕстерсе тыт, — хушрĕ вăл мана.

Вăл пӳрнесене çыртса лартсан? — шиклентĕм эпĕ.

— Эсĕ, шампа хырăм, хуп çурăм, малалла пĕшкĕн... Пĕшкĕн, пĕшкĕн, улму вăхăтсăр тухса ӳкесрен ан хăра.

— Эсĕ вара, — мана вĕрентсе каларĕ выльăх тухтăрĕ пулни. — Эпĕ шутласа пырса «виççĕ» тесенех пан улмине карт турт. Итле, шутлатăп: пĕрре... иккĕ... виççĕ-ĕ-ĕ!

Те хам хытă туртнăран, те пан улми хăвăрт тухнăран нак кайса лартăм çĕр çине. Çăварĕ пушаннă этем сасартăках хăрушла: «Ай-й-й!» — тесе кăшкăрса ячĕ, вара пуçларĕ пахчара унталла та кунталла чупкалама, кайран Андрей Андреевича кăкăрĕнчен ярса тытрĕ:

— Эс мĕн турăн мана? — куçĕнчен вут-хĕм сирпĕтме тытăнчĕ вăл.

— Çăварунти улмана кăлартăм.

— Тата мĕн турăн?

— Калаçакан турăм — тусăмсене килĕштерес тесе тăтăм та пан улмине кăшкăракан еннелле тăсрăм. Пăхатпăр та — антоновкăн çӳлти пайĕнче харăсах икĕ шăл, çапса лартнă тейĕн. Вĕсене курсан, выльăх врачне силлекенĕн сăн-пичĕ тĕлĕнмелле хăвăрт çуталса кайрĕ. Вара вăл ăсран тайăлнăнах кăшхăрса ячĕ:

— Ур-ра! — терĕ вăл тĕлĕнмелле хĕпĕртесе. — Ур-ра! Пĕлетĕн-и, Андрей Андреевич, хăрăк ку шăлсене кăларас тесе хăçантанпа ĕмĕтленнĕ эпĕ?

Пахчари кĕтесрен, вĕлтĕренлĕ вырăнтан, Нил Наумович йывăç-курăка чаштăртаттарса тухрĕ.

Майĕпен пухăнма пуçларăмăр, анчах пурте мар — Михуть курăнмасть. Ун-кун пăхкалатпăр, Михуте асăрхамастпăр.

— Авă лерен темĕнле хĕрарăм килет пулмалла! — илтĕнчĕ улмуççи тăрринчен.

— Ан! — кăшкăрчĕ Нил Наумович. Анас шутпа кăштах йаштăртатсан Михуть тачах персе анчĕ икĕ ури çине. Урăлла пулсан икĕ урине те амантмалла-ха вăл, капла, мухмăрла — чиперех.

Кайран пӳрте пĕрте кĕтĕмĕр.

— Тек-тек çур литрсен мăшкăлĕ пулар мар, — терĕмĕр татăклăн. — Курăр, мĕн-мĕн хăтлантарса ячĕ вăл пире. Хамăртан хамăр мăшкăллăтпăр-иç?

Павел Петрович ассăн сывласа, шӳтсăр хуйхăрса:

— Эпĕ сире вăй çитнĕ таран пулăшрăм, — терĕ чунтанах тархасласа, — халь эсир мана пулăшăр. Эпĕ çĕрле, çывăрма выртас умĕн, хам çумри пĕтĕм укçа-тенке çĕр улмин тахăш тĕмĕ çумне чавса хутăм. Вунă пин тенкĕ ытла укçана ту паймастăп. Атьăр, тăванăмсем, пĕрле шырар. Ик-виçшер кас йышăнатпăр та кашниех — самантрах шыраса тупатпăр.

Ку сăмахсем мана, пахча хуçине, самантрах урăлтарчĕç. Ара, терĕм вара хама хам, пĕтĕм çĕр улми пуссине айăн-çийĕн çавăрса тухаççĕ-иç!..

— Çук, тăванăмсем, апла юрамасть, — татăклăн пĕлтертĕм эпĕ.

— Мĕншĕн юрамасть? — пит-куçне тĕксĕм сăн çапрĕ Павел Петровича.

— Кам пытарнă — çавах шыратăр. Пурте аппалансан пытарнă укçана тата та аванрах хупласа хума пултаратпăр, чипер ӳсекен çĕр улмине те амантатпăр.

— Çапла, ху шыра, — терĕ Андрей Андреевич.

— А-а-а, — аллине сулчĕ Павел Петрович, — сирĕнпе калаçса çăвар тутине сая ярам мар-ха.

Малтан вăл кĕпе çаннисене тавăрчĕ, унтан — шăлавар пĕççисене, вара чылайччен шухăшласа тăчĕ те ĕçе пикенчĕ. Çĕр улми йăранĕсене асăрханса, тăрăшса кăпкалатрĕ Павел Петрович. Часах лачкам тара ӳкрĕ. Пире-мĕн, кушакка — кулă, шăшие вилĕм терĕш, шăл йĕретпĕр. Пирĕн йăли-йĕрки çапла: çын инкекре тĕк — кулмаллах. Кулни, ихĕрни сахал-ха: пурте туххăмрах полиглотсем пулса кайрăмăр.

— Шнель, шнель, — тет пĕри нимĕçле.

— Тисрек, тисрек, — хушса хурать тепри тутарла.

— Часрах эс, хăвăртрах, — хавхалантаратăп эпĕ чăвашла.

— Ых-х, анра çарăк! — мăкăртатать пикенсех ĕçлекен.

— Анра çарăк мар вăл, — тетĕп. — Кунта анра çарăк çук, мăян кăна.

— Ых-х, анра çарăк! — хăйĕннех перет Павел Петрович. — Анра çарăк тесе хам пирки калатăп-ха эпĕ.

Павел Петрович пĕр сехетре ĕçне вĕçлерĕ. Анчах — нухрат çук. Чылайччен тĕмсĕлсе пăхрĕ вăл. Унтан, пач кĕтмен çĕртен:

— Тупрăм! — терĕ. — Тинех тупрăм! Хĕрлĕ кăшман ани тĕлне чупса пычă те самай парка кăшман çумĕнчи тăпрана сирчĕ, целлофан пакетпа чĕркесе хунă пĕр тĕркем хут укçа туртса кăларчĕ.

— Ку кăшман-иç, — тетпĕр тĕлĕнсе, — çĕр улми мар.

— Ых, анра çарăк, çав çур литра пулах çапла улталантăм-и вара эпĕ?

— Хă, — тет пĕри, — шанчăклă перекет касси шыраса тупнă эсĕ.

— Шел, ку кăшман хăй пит парка пулсан та укçа упранăшăн процентсем памасть, — чăнласах пăшăрханнăн пуплет тепри.

— Процентне хуçи хăй кăларать, — хушса хуратăп эпĕ. — Çĕр каçичченех арендăна илнĕшĕн мана кăштах лекес пек туйăнать.

Павел Петровичăн ырă пĕр йăла пур: ĕçе тытăнас умĕн вăл ялан тӳпенелле пăхса тĕплĕ шухăшлать, вара тин уçăмлăн калать. Халĕ те кăнтăртан çурçĕрелле вăраххăн шăвакан мамăк пĕлĕтсене чылайччен сăнанă хыççăн:

— Акă мĕн, — терĕ çĕрелле пăхса. — Укçа-тенкĕ арăмран пытара-пытара хуни, ир тăрсан нухрата ниепле те шыраса тупайманни манăн пайтах пулнă... Манашкал шереметсем мĕн чухлĕ-ши?

— Ун пекки, чăн сăмах, манăн та пулкалать, — хушса хучĕ пĕри.

— Манăн та пулман мар, — терĕ тепри.

— Санăн вăл енĕпе еплерех? — пурте харăссăн ыйтрĕç манран. — Ма шарламастăн?

— Мĕн мухтанмалли пур-ха кунта? — ӳрĕк-сӳрĕклĕх ытамне кĕрсе ӳкрĕм хайхи. Склероз — професси чирĕ вăл маншăн. Суя укçа çапакан ятне те илтнĕ.

— Ну, ну, каласа пар-ха пире; укçа пытарса хăварнипех епле майпа суя укçа çапма пулать? Пире те вĕрентсемччĕ.

— Вăл çулхине эпĕ, пысăк укçа шыраса, яш-кĕрĕмпе Мускава кайса килнĕччĕ. Шĕкĕр хулари улпутсенчен пĕрне Мускав тулашĕнче кермен туса патăмăр. Хуçи аван тӳлерĕ: кашнинех çитмĕлшер пин тенкĕ. Киле çитсенех арăма хĕрĕх пинне тыттартăм. Ытти вăтăр пинне, кĕсьерен кăлармасăр, шăлавара хыврăм та ăнаçлă таврăннăшăн хĕпĕртеме пахчана туссем патне тухса лартăм. Хĕпĕртенĕ арăм кăлăк чăххи чĕпписемпе саркаланса çӳренĕ пек хăналать пире. Пӳртрен пахчана, пахчаран пӳрте хутлать кăна.

— Арăмна мĕн чухлĕ лекрĕ? — ыйтаççĕ юлташсем.

— Хĕрĕх.

— Ма апла çеç?

— Ара, Мускава тепре каясси тахçан пулать-ха. Унăн укçи час пĕтет, каллех ыйтма тытăнать. Саппас çамкаран çапмасть.

— Апла, — терĕç пурте пĕр шухăшлăн, — пирĕн те хĕрĕхшер пин çеç памалла...

Кайрĕ пирĕн ĕçкĕ-çикĕ тапранса: ара çуршар литршăн темех пулмĕ-çке. Мускаври метрора ĕçместпĕр-иç: тăван вырăнта, хам лартнă улмуççи айĕнче!

Тусăмсем, мухмăр сунталĕ çинче ларса хамăра кризис мăлатукĕ çапмĕ-и тесе шикленсе ларакансем, йывăç сулхăнĕнче ман калавăма питĕ тимлĕн итлеççĕ.

— Ларнă эпĕ ун чухне улмуççи айĕнче, — тетĕп, — выртсах ĕçнĕ-и, лайăхах ас тумастăп. Вĕсем тайкки-тайкки çул тайлăк, çул тайлăк мар, хам тайлăк меслечĕпе тухкаласа кайнине çăра тĕтĕмри мĕлкесем евĕр курса юлтăм. Пӳрте хамах кĕнĕ. Арăм эпĕ илсе килнĕ укçана шутласа ларать. Вакраххисене парсан вĕсене вăл çĕрĕпех суса ларма та ӳркенмест. Тахçан,

çавăнччен виçĕ çул маларах, вуннăлăххисене çирĕм пĕр пин панăччĕ. Малтан ыйтрĕ:

— Кунта мĕн чухлĕ?

— Çирĕм пĕр пин... — Пуçларĕ шутлама. Тарласан-тарласан:

— Эсĕ ниçта та такамăнне пĕçертсе килмен-и хальхинче? — ыйтрĕ вăл.

— Килмен.

— Эппин, мĕн-ма çирĕм тăххăр тухать?

— Пĕлместĕп, чĕкеçĕм, эсĕ çав териех хăвăрт чаштăртаттарса ларнăран, ахăртнех, хăш-пĕр вуннăлăххисем икшер пая уйрăлаççĕ курăнать...

Каллех шутлама пикенет. Сăн-пичĕ хитре ун, кăмăлĕ çеç аплах мар. Унтан:

— Эс, — тет, — таçта акса-тăкса çӳремен-и?

— Çӳремен.

— Апла мĕн-ма вун сакăр пин çеç тухать.

— Ара, вуннăлăххисем каялла çыпçăнса ларчĕç пуль, — тетĕп.

Ирхине улмуççи айĕнче ларнă хыççăн пуç тӳсме çук ыратнипе, кӳршĕ пӳлĕмре тем чаштăртатнипе вăранса кайрăм. Арăм укçа шутлать-мĕн.

— Ну, мĕнле çывăртăн? — сас пачĕ мăшăрăм.

— Чиперех, — терĕм ытахальтен.

— Ара, чипер пулмасăр, арăмсăр ыйхă вăл тутлăрах ĕнтĕ.

— Эсĕ мĕншĕн тарса кайнă тата?

— Санпа выртса пăх-ха унта. Уртемĕн «Беларуç» тракторĕнчен пĕртте кая мар харлаттаратăн. — Сана Мускаври хуçу ытлашши паман-и?

— Паман.

— Мĕншĕн тата кунта 80 пине яхăнах тухать?

— Эсĕ çине-çинех, çĕрĕ-çĕрĕпех ан шутла — унсăрăн çĕр пине те çитме пултарать, — терĕм çеç.

— Сан хуçу юмăç мар-и?

— Çук.

— Халь — каллех çитмест, — ассăн сывлать мăшăрăм. — Кил-ха, хăв шутла ман куç умĕнчех.

Тухрăм. Шутларăм, пиншер-пиншер тенкĕлĕх купа туса. Укçа шутласа ывăннă мăшăрăм çывăрса кайрĕ.

Манăн телее — алăк уçăлчĕ те Мускавра пĕрле ĕçленĕ Михуть тусăм кушак аçинни евĕр чăл-чал мăйăхне, уссине шăлкаласа кĕрсе тăчĕ. Куçне чеен хĕскелесе картишнелле тухма ыйтрĕ.

Арăм ыйха путнипе усă курса ĕç тумтирне кĕпе çумалли машинăна чăмтартăм. Вăраха пыман ку ĕçе йăпăр-япăр вĕçлесе Михуть хыççăн картише тухрăм.

Ĕнерхи вырăна, улмуççи айне, вырнаçсанах Михуть ĕçе пикенчĕ, казаксенни евĕр шалпар шăлаварĕн кĕсйисенчен, питĕ ассăн сывласа, «лешне» туртса кăларчĕ. Шарласах каймасть хăй темшĕн. Кăмăлсăр. Эппин, тем пулнă. Çур литршар ĕçнипех аптăрамалли темскер сиксе тухман-ши?

— Эсĕ ĕнер пӳрте мĕнле кĕнĕ? — ыйтрĕ вăл вăрахран.

— Чип-чиперех. Эсĕ ху тата мĕнле çитнĕ?

— Ĕнер киле кайнă чухне, — пĕлтерчĕ вăл, — чикансен тĕлне лекнĕ эпĕ. Пĕлместĕп, алă тупанне сăнаса тăнă хушăрах кĕсье тĕпне мĕнле курма пултарнă-ха вĕсем? Ман çумра ултă кĕсье, пурте — пуш-пушă. Ултă пус тăрса юлинччĕ хăть. Арăм халь уйрăлса каяссипе хăратать. Кашни сăмахĕ — çивĕч пуртă.

— Ан пăшăрхан, — терĕм Михуть тусăма, — ман сыхланса юлни пур... Чим, пӳрте кĕрсе илсе тухатăп.

Кĕтĕм. Кĕпе çумалли машина пит хăватлăн кĕрлет. Епле майпа ĕçлеме тытăннă вăл?

— Эсĕ хăвăн тумтирӳсене пăрса çак, ман хамăнне çуса тасатмалла, — терĕ мăшăрăм, тахăш вăхăтра вăраннăскер, кĕпе çумалли машинăна хускатса янăскер.

Çав хушăра ваннăйра машина чарăнчĕ. Кĕпе-йĕме çакас тесе машинăн хупăлчине уçрăм — чĕре як чиксе илчĕ: кĕпе çумалли машинăра, чи çиелте,

тумтир курăнми хут. Пурте пит шупка хăйсем, порошокпах , çăваннăскерсем, арăмран пытарнăскерсем, шыва чикиччен шăлавар кĕсйинчен кăларма маннăскерсем. Пĕрне тытса пăхатăп — миçе тенкĕлĕхĕ курăнмасть, тепри те, пурте çавах.

Сасартăк çурăм хыçĕнче арăм сасси илтĕнчĕ:

— Ку мĕн мыскари? — хаяррăн ыйтрĕ вăл.

— Мускавра пĕри мана суя укçа панăччĕ, — куç кĕрет суйма тиврĕ манăн. — Вăт... çăвиччен кĕсьерен кăларма маннă...

— Мĕншĕн? — тĕпчет мăшăрăм. — Камран кулмалла? Эсĕ мĕн, суя укçа çапакан-им? Кĕпе çумалли машина тĕпне укçа машинки вырнаçтартăн-им?

Чĕнместĕп.

— Малашне эсĕ лавккана шӳтлемелле хăвах çӳре, — тапранса кайрĕ чиперккем. — Çăкăр, сĕт-çу, аш-пăш туян шӳтлемелле... Хăвăртрах Мускава кай шӳтлемелле, каялла тӳлемесĕрех таврăн!

Манăн калава дача сулхăнĕнчи çынсем малтан чиперех итлесе ларатчĕç, кайран кулса вăй пĕтнипе çил çинчи пуш пучах евĕр сулланакан пулчĕç.

— Капла май çук, тусăмсем, — терĕ хĕрлĕ кăшман çумĕнчи «перекет кассин» хуçи Павел Петрович, — куçăм çиппе çĕленĕнех хупăнма тытăнчĕ.

— Хупăнма тытăнсан, — ыйтрăмăр эпир пĕр çын пек, — мĕн тумалла?

— Кĕсьери кассăна уçмалла, — куçне сăтăркаларĕ Павел Петрович. — Михуте эрех туянма ятăмăр.

Калаçса ларнă хушăра арăм персе çитрĕ.

— Кĕтесри пăтара çакăнса тăракан халат кĕсйинчи енчĕке илсе тухса лар-ха. Виçĕм кун манса хăварнă. Часрах. Манăн васкамалла! — терĕ.

Илсе тухрăм енчĕке. Каялла кайиччен вăл мана дачăн иккĕмĕш хутĕнче хăш-хăш вырăна пăта çапма хушса хăварчĕ:

— Хурăн милĕкĕсем çакма вăрăм пăтасем çапăр, — терĕ. — Кайран эпĕ кантра карăп. Пысăк шĕлепкеллисене çапсан аванах.

Арăм кайрĕ.

— Чăрмантараканни çук, — терĕмĕр Павел Петровича. — Кала калас тенине.

— Пирĕн, — терĕ, — вăрçă сăнавĕ ирттермелле. Вăл хаяр пулмалла, — чышкипе юнаса илчĕ такама. — Эпир арçынсем мар-им?

— Арçынсем!

— Апла тăк, калăр, мĕншĕн çĕнтерейместпĕр тăшмансене. Вĕсем пукане çӳллĕш çеç-çке.

Шăпăрт пултăмăр.

— Хăй пĕчĕк пулсан та пире кашнинчех парăнтарать. Эпĕ çур литр пирки калатăп. Эпир ĕçме пĕлместпĕр. Сĕтел хушшине кĕрсе ларатпăр та тӳрех кӳпме тытăнатпăр. Çур литрсем çине пăхса: «Ну, тӳсĕр, хальхинче ним тусан та парăнмастпăр», — теместпĕр. Вăл, чĕмсĕр тăшман, çавăнпа çĕнтерет те пире. Паянхи сăнав «Ну, тӳсĕр!» чĕнӳпе иртмелле.

Кĕçех Михуть тармакланса çитрĕ. Икĕ аллинче — пысăк икĕ хутаç. Вĕсенче иккĕшĕнче те — «тăшмансем». Шăкăрин. Пурте çут калпаклă пуçĕсене мăн кăмăллăн кăтартаççĕ. Пӳрте кĕтĕмĕр. Сĕтел хатĕрлерĕмĕр.

— Тăшмансен карттусĕсене хывăр! — хушу пачĕ банк хуçи.

Пĕрер ятăмăр. Чăмлама тытăнтăмăр. Эпĕ çенĕке тухса пăтасемпе мăлатук тупса сых ятне çӳле улăхса хутăм. Пурте шăпăрт ĕçеççĕ, чĕнмесĕрех лараççĕ. Кашнин сăмси умĕнчех — пĕрер тăшман. Мĕншĕн чĕнмеççĕ-ха? Сăнав. Эрех кĕленчисене ылханса лармалла. Тарăхăвĕ хаяр пулмалла: «Ну, тӳс, парăнмастăп эп сана! Сана пур пĕр ӳкеретĕп, хам пур пĕрех тӳнместĕп!»

Вăрçă вăхăтĕнче те лăпкă самантсем пулаççĕ. Çавнашкал самант çĕрлехи сехете килчĕ. Эпир иккĕмĕш хута улăхрăмăр. «Арăму хушса хăварнине тăвар-ха, — текелеççĕ тусăмсем. — Пулăшар сана». Пуçларăмăр пăта çапма. Хăшĕ мăлатукпа ĕçлет, хăшĕ пĕчĕкçĕ кувалдăпа. Иккĕмĕш хутри пĕренесем тăр-тăр чĕтреççĕ. Пĕрисем «Апа-ап!» — теççĕ. Теприсем: «Ух-х, алла лектертĕм», — теççĕ. Чылайран тин антăмăр аяла. Тăшманăмăрсем, тĕлĕнмелле, çаплипех тӳп-тӳрĕ тăраççĕ.

— Манăн шухăшăмпа, — терĕ Павел Петрович, — сăнав палăртнă пекех пырать. Кам та кам хăйĕн умĕнчи тăшманне çĕнтерет — çавна медаль.

Ирхине янкăс сасса пула куçа уçрăмăр. Арăм иккен.

— Кунта эсир, — тет, — хулари ӳсĕр-пӳсĕрсен клубне уçасшăн-им? Калăр, çӳлте мĕскер тунă эсир?

— Экс... — терĕ Павел Петрович иклеткелесе... — перимент.

— Унашкал эксперимент тума халех килĕрсене вĕçтерĕр! — хăвалать мăшăрăм. — Эх, эсир те çав — Раççей паттăрĕсем.

Тусăмсем ыйту паллисем пек хутланса пĕрин хыççăн тĕпри сулланкаласа тухса кайрĕç.

Арăм мана шăтарасла пăхать, эпĕ — ăна.

— Атя-ха çӳле, — терĕ вăл татăклăн. Улăхрăмăр.

— Ку мĕскер? — çĕрле çапнă патăсенчен пĕрне шĕвĕр пӳрнипе тĕллесе ыйтрĕ мăшăрăм.

Пăхатăп та — куç хупăнмасть: тахăшĕсем пăтана шлепкипе пĕрене çумне тытса çуррине яхăнах çапса кĕртнĕ. Хытă тӳнккенĕрен пăтан шĕвĕр вĕçĕ шлепкеленсех ларнă. Пĕр сăмахпа — икĕ шлепкеллĕ пăта пулса тăнă.

— Ку тата мĕскер? — тепĕр пăта умне илсе пычĕ чун варли.

Тахăшĕсем пăтана этем ретлех, шĕвĕр вĕçĕпех çапса кĕртнĕ, апла пулин те ăна темшĕн-çке ыйту палли евĕр кукăртса хăварнă.

Ытти пăтана арăмсăрах, хам тĕллĕнех, пырса пăхрăм. Виççĕмĕш пăта ункă пек çавракa. Тăваттăшĕн çаврашкасем тата та ытларах: пружина татăкĕ çакăнса тăрать тейĕн.

Антăмăр аяла.

— Эх, Раççей арĕсем, ик шлепкеллĕ пăтасем, — пуçне сулла-сулла ятлаçать арăм. — Мĕн тумалла халĕ сирĕнпе? Ку пăтасене хăвах йĕркеллĕн çапса кĕртетĕн-и е кама та пулин чĕнмелле-и?

Шарламастăп.

— Хулари «Çурçĕр» лавкка умĕнче Китай çыннисем киоск тунине пăхса тăтăм, — терĕ мăшăрăм. — Ну пултараççĕ те иккен. Ним каламалли те çук: пит тăрăшуллă халăх. Çавсенчен пĕрне чĕнсе илес мар-и пăта çапма?

Капла калани чĕлхеме çăвар маччи çумне çыпçăнтарсах лартрĕ. Мăшăрăм — татăклă этем. Чĕнсе килме те пултарать. Вăт пăхса тăр такамсем манăн дачăра мĕнле ĕçленине.

Ĕçе тӳрлетме çӳле улăхрăм. «Мăшăрăм пире ик шлепкеллĕ пăтасемпе тĕрĕсех танлаштарать иккен. Тĕнчере пăтана икĕ шлепкеллĕ çапса лартма пултаракан ăстасем тăрса юлнă-ши?.. Тен, Раççейре çеç?.. Хам хуçалăха хамах панкрута кăларса пурăнатăп-и?! Шиш!»

*Енĕш, В. Ик шлепкеллĕ пăтасем : [калав] / В. Енĕш // Хыпар. – 2012. – 25 кăрлач. – С. 4.*